Иван АХРАТ

# МУЗЫКА — ЧӖМПӖРТИ ЧӐВАШ ШКУЛӖНЧЕ

**Чӗмпӗрти Чӑваш шкулӗн тӑван музыкӑри пӗлтерӗшӗ пирки Федор Павлов ҫапла ҫырать: «Пӗтӗмпе шутласа илсен ҫак пысӑк, культурӑллӑ ӗҫе пуҫарса яраканӗ Иван Яковлевич Яковлев. Ҫак ӗҫ ҫуралса тухнӑ йӑва — Чӗмпӗрти Чӑваш шкулӗ».**

**Федор Павлов — Яковлев Шкулӗн чи парка хунавӗ. Унӑн ӗҫне-хӗлне мӗн тери пысӑка хурса хаклатӑп пулин те, унӑн тӑван юрра-кӗвве вӗҫсӗр-хӗрсӗр юратакансен чунне вӗчӗрхентерекен, суран тухичченех чӑрмаласа тӑракан сӑмахӗсемшӗн ӳпкелешмесӗр тӑма пултараймастӑп эпӗ. Вӑл сӑмахсем ҫаксем: «чӑваш, ӗслеттерсе хӑратнӑ тискер кайӑк пек, шӑршлӑ ҫырма-ҫатрасенче ҫӗҫ тарса пытанса пурӑннӑ...» «...чӑваш музыки «ҫырмари юрӑ» анчах пулнӑ».**

**«Ҫырмари юрӑ» статьине Федор Павлов 1928 ҫулта ҫав тери пархатарлӑ тӗллевпе ҫырнине пӗлетӗп-ха. Иван Яковлева тӗрлӗрен ӑстиҫуксенчен хӳтӗлес шухӑш-ӗмӗт канӑҫ паман ӑна. Анчах ку сӑмахсем ҫав ҫулсенчи аркатулӑх идейипе тӑлланса ларнӑ. Ахӑрса кайнӑ большевиксем иртнине пӗтӗмпех, никӗсӗмӗнӗпех ишсе аркатса тӑкас тӗллевне акӑш-макӑш тӑрӑшса пурнӑҫа кӗртсе пынӑ.**

**Федор Павлов та, ҫак пилсӗр кампанин чыссӑр эшкерӗпе ермӗшсе кайса, тӑван халӑхӑн иртсе кайнӑ ӗмӗрӗсене «шӑршлӑ ҫырма-ҫатрасене» вӑрӑнтарнӑ. «Шӑршлӑ ҫырма-ҫатра» тенӗрен, эх, халь курасчӗ пирӗн чӑваш ҫӗршывӗн ҫав тӑрна куҫӗ пек тӑрӑ кӳллисене, шурлӑхӗсемпе юханшывӗсене! Никам ура ярса пусман ӗмӗрхи сӗм вӑрмансен шӑплӑхӗсенчен шӑнкӑртатса юхса тухнӑҫке вӗсем, ача куҫҫулӗ пек таса шывсем! Хайӑр ҫине выртса ӗҫеттӗмӗр мар-и сывлӑхшӑн сиплӗ ҫак таса шыва... Эх, нихӑҫан та каялла юхса килеес ҫук иртнӗ саманасен тӗпсӗр авӑрне юхса кайнӑ симпыл евӗр чуна уҫакан ӑшпиллӗ шывсем...**

**Ҫакна вара пурне те илтӗнмелле шаккасах калар: чӑваш хӑй юррине нихӑҫан та «ҫырмари юрӑ» тесе шутламан, хӑйӗн юрри-кӗввинчен вӑтанман, вӑййиташшинчен йӗрӗнмен, чӑн-чӑн оперӑсенчи пек ҫурхи вӑййисенчен, туй-шилӗкӗсенчен сивӗнмен. Хӑйӗн ытармалла мар юррисене пӗтӗм чун хавалӗпе кӑкӑр туллин мӑнаҫланса юрланӑ, ламран-лама илсе пынӑ. Ҫакӑн ҫинчен пире Яковлевсемпе Тимофеевсем, Юркинсемпе Ашмаринсем, Шелеписемпе Хусанкайсем, Ивановсемпе Миттасем анчах мар, ют ҫӗрсенчен киле-киле кайнӑ хӑнасем ҫырса хӑварнисем те ӗненмелле каласа параҫҫӗ: тӑван халӑхун нихӑш саманине те ан хурла! ан тирке! Халӑх кунҫулӗ ӗмӗрӗпех сӑваплӑ. «Чуваши самый музыкальный или наиболее любящий музыку народ», — ҫырнӑ Мошков, паллӑ ӑсчах-фольклорист. «Мӗн вӑл опера, мӗн вӑл балет!? Вӗсенчен пулать-и ҫак ӗмӗр ҫамрӑк ҫуркуннен ырӑ шӑршине, вӗҫсе иртен ӗмӗрсемшӗн ачашшӑн хуйхӑрнине-кулянние систересси-туйтарасси!.. Ун пек юрра шухӑшласа кӑларма пулать-ши вара!»— тӗлӗнет чӑваш ҫамрӑкӗсен ҫурхи вӑййисенчен Гарин-Михайловский, вырӑс писателӗ.**

**Федор Павлов композитор — Иван Яковлевӑн сапӑр та хӑтлӑ ҫунатти айӗнче юп курса чечек ҫурнӑ музыка ӑсти! Унӑн хӑйӗн те чӑваш халӑхӗн тӗпсӗр ҫӳпҫинчен илмен пӗр кӗвӗ те, пӗр юрӑ та ҫук-ҫке! Совет саманин ҫӗнӗ юррисем тесе хайланисем те, «Хӗрлӗ салтак юрри», «Ҫамрӑксен юрри», «Колхоз юрри», «Ҫӗнӗ юрӑ» тата ыттисен кӗввисем те пӗтӗмпех халӑхран.**

**Ҫапла, чӑваш халӑхӗн нумай ӗмӗрсем хушши хӗрсе туптанса ҫитнӗ музыка культури пулман пулсан, Чӗмпӗрти Чӑваш шкулӗн сцени ҫинче епле майпа**



*Хӗрсен училищинче вӗренекенсем. 1896 ç.*

**вырӑс генийӗн Михаил Глинкӑн «Жизнь за царя» («Иван Сусанин») опери кун курма пултарӗччӗ-ха! Мӗнле майпа Антонида каватинине Ĕçлĕ Иван (Эсливанов) чӑваш хӗрӗ Капитолина юрлама пултарӗччӗ-ши! Ăçтан тата Чирӗклӗ Патӑрьель чӑваш каччи Федор Павлов Сусанин тата Мельник (Арман хуçи) арийӗсене юрласа пама пултартӑр!.. Ахальтен мар: «Удивительный слух у этих чувашей!» — тӗлӗнсе çырнӑ «Симбирянин» хаçат корреспонденчӗ, Чӑваш шкулӗн концертне курсан. Концерт Чӗмпӗр дворянӗсене, вӗсен предводительне, Чӗмпӗрти ӑсчахсен архив комиссийӗн председательне В. Н. Поливанова тӗлӗнтерме пултарнӑ-çке!**

**Иван Яковлевич Яковлев!**

**Ют чӗлхери сӑмахпа каласан — титан, чӑвашла — Улӑп. Тӑван халӑх юррикӗввине хӑй чун-чӗрине мӗн тери тарӑн хывнине пире Федор Павловӑн «Çырмари юрринчи» сыпӑксемех ӗненмелле каласа параççӗ: Иван Яковлевич чӑваш ялӗнче çамрӑксем юрланине итлесе тӑнӑ хыççӑн «ӑш тулса çитнипе, чӑтаймасӑр йӗрсе янӑ». Çак вышкайсӑр пысӑк юрату, тӑван халӑх кунçулне тивӗçлипе хаклани Иван Яковлевича пысӑк ӗçсем тума хавхалантарнӑ. Вӑл музыкӑн пӗтӗм вӑйӗсене хӑй тавра пухать. Шкулта чӑваш музыканчӗсем, капельмейстерӗсем Митрофан Дмитриев, унӑн ывӑлӗ Иван Дмитриев, Василий Колпаков, Роман Идобаев, Петр Пазухин, Тимофей Малышев ӑстасем музыка ӗçӗхӗлӗн йывӑр тиевне кӳлӗнсе, кунран-кун, çулран-çул малалла туртаççӗ, тӑвалла хӑпартаççӗ.**

**Иван Яковлев чӑваш музыка культурин аталанӑвӗ çине те чӑн-чӑн аслӑ стратег пек пӑхнӑ. Паянхи пурнӑçпа пурӑнман вӑл, кулленхи ӗçсене туса пынӑ хушӑрах аякка пӑхнӑ, вуншар çулсем урлӑ малашлӑха курса тӑнӑ, чӑваш сценине, эстрадине чӑваш композиторӗсен оперисем йышӑнасси, филармонисен**

залĕсенче чăваш симфонийĕсемпе ораторийĕсем янăрасси çинчен ĕмĕтленнĕ. Çак тĕллевпе аслă стратег вырăссен композиторĕсемпе, музыканчĕсемпе, культура çыннисемпе паллашнă, вĕсене хăй шкулĕнче ĕçлеме явăçтарнă. Чĕмпĕрти паллă музыкантсенчен кăна çаксене асăнма пулать: Н. П. Лыбин виолончелист, О. Ф. Крамер композитор, капельмейстер, С. М. Лонгер сĕрмекупăсçă, Н. И. Шувалов, Яковлев — Чĕмпĕрти кадетсен корпусĕн капельмейстерĕ тата ыттисем. Художниксенчен Н. Ф. Некрасова палăртмалла. О. Ф. Крамер тăрăшнипе Иван Яковлевич симфони оркестрĕн пĕтĕм комплектне туянать, çапла вара шкулта вĕрсе каламалли инструментсен тата симфони оркестрĕсем пулса тăраççĕ. Каярахпа симфони оркестрĕ «Русланпа Людмила», «Иван Сусанин» оперăсен увертюрисене, «Эгмонт», «Кориолан» увертюрăсене, Михаил Глинкăн «Камаринская» фантазийĕпе «Вальс-фантазине», Петр Чайковскин «Баркаролине», Верди, Вебер, Россини, Шуберт, Мендельсон, Беллини произведенийĕсене хăй репертуарне кĕртет. Пĕрлештернĕ хор А. Гречанинов, А. Архангельский, В. Орлов çырнă кăткăс произведенисене тĕрлĕ композиторсен оперисенчи хорсене юрлать.

«Кашни вĕренекенĕн юрлама кăна мар, хор йĕркелесе, ăна ертсе пыма та пĕлмелле», — тенĕ Иван Яковлев. Вăл юрă урокĕсенче нотăпа юрлама, музыка теорийĕпе, гармони вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарма хистенĕ педагогсене.

Иван Митрофанов пирки вара уйрăмах чарăнса тăмалла. Вăл Иван Яковлевичшăн хресна ывăл пекех пулнă темелле. Унăн ашшĕне Митрофан Дмитриевич Дмитриева шкул директорĕ тахçантанпах пĕлсе тăнă, унăн килйышĕпе тачă çыхăну тытнă. Иван Дмитриев Хусанти Духовнăй училищĕре, унтан Учительсен семинарийĕнче вĕренет. 1903 çулта вăл Петрбургри Патша çурчĕ çумĕнчи (Придворнăй) хор капеллинче хăй ăсталăхне туптама тытăнать. Вăл кунта вĕренме кĕресси те Иван Яковлевич тăрăшмасăр пулман ĕнтĕ. Çакна май Иван Яковлевич питĕ лайăх пĕлнĕ Степан Васильевич Смоленские асăнмалла. Вăл, Яковлевăн тантăшĕ, вырăс музыкин тата чиркӳ хорĕсен паллă çынни пулнă.

Иван Митрофанович, 1906 çулта капеллăран вĕренсе тухсан, Иван Яковлевич чĕннипе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлеме тытăнать. Степан Максимов композитор ун пирки каярахпа çапла çырать: «Хăй ĕçне вăл калама çук лайăх пĕлетчĕ. Унăн таланчĕпе пултарулăхне тивĕçлипе хак пама сăмах та çитес çук. Сĕрмекупăс калама та шутсăр ăстаччĕ».

Çапла, Иван Дмитриев ĕçленĕ çулсенче шкулта музыкăна вĕрентес ĕç тата та çӳллĕ шая çĕкленет. Вăл хĕрсен, арçын ачасен хорĕсене тата хутăш хор йĕркелет, вĕсен ăсталăхне куллен ӳстерсе пырать.

1909 çулта кăрлач уйăхĕнче хула предводителĕ В. Н. Поливанов ыйтнипе вĕренекенсен утмăл ачаран тăракан хорĕ тата уйрăм юрлакансем Дворянсен пухăвĕнче пысăк концерт кăтартаççĕ. Концерт мĕнле иртни çинчен эпир Иван Яковлевич мăшăрĕн, Екатерина Алексеевнан пĕр çырăвĕнчен пĕлетпĕр. «Паян пирĕн вĕренекенсем, — çырать вăл, — Дворянсен пухăвĕнче пурне те тĕлĕнтерсе пăрахрĕç. Халăх вĕсене çав тери хапăл туса йышăнчĕ, программăна пĕтĕмпе тенĕ пекех темиçе хутчен юрласа пама ыйтрĕç. Поливанов, тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕскер, Иван Яковлевича çапла каларĕ: «Эпĕ сирĕн кунашкал хор пуррине тата вăл çав таран чипер юрласса кĕтме те пултарайман». Киле таврăнсан хĕрачасем мĕн асра юлнине мана, пĕр-пĕрне пӳлепӳлех каласа кăтартрĕç. «Эпир питĕ лайăх юрларăмăр, — теççĕ. — Хамăра репетицири пекех ирĕклĕ туйрăмăр. Кайран пирĕн пата нумай-нумай куракансем пыра-пыра кайрĕç— ятлă-сумлă ватăсем, шурă çӳçлĕскерсем, мухтаççĕ пире, тав сăмахĕ калаççĕ. Юрланă чухне пуян хуçасем Иван Яковлевича пыра-пыра алă панине те курса тăтăмăр. Çакă пире питĕ-питĕ савăнтарчĕ.

Губернатор хăй те пырса кайрĕ пирĕн пата, кăмăллăн тав турĕ пире. «Акă ĕнтĕ, — терĕ Иван Яковлевич губернатора, мăнаçланса, — чăвашсем те Дворянсен çуртне лекме тивĕç пулчĕç». Уйрăмах пĕр хĕрача «Хĕр йĕррине» юрлани питĕ килĕшрĕ, — çырать малалла Екатерина Алексеевна. — Сасси таса унăн, çепĕç, юрласса та пысăк туйăмпа юрларĕ, хăйĕн тантăшĕсене те тĕлĕнтерсе пăрахнă». Вăл Антонина Букарова пулнă.

Чăваш халăхĕн вунвиçĕ юрри янăранă ун чухне Дворянсен пухăвĕнче! Вĕсене пурне те Иван Дмитриев йĕркелесе программăна кĕртнĕ.

Федор Павлов асаилĕвĕсенчи йĕркесемпе те паллаштарма пулĕ çак концерт çинчен. «Чĕмпĕр шкулĕнчи пĕр пĕчĕк хор пĕтĕм кĕпĕрнери дворянсем, аслă чиновниксем, улпутсем, губернаторсем, генералсемпе архиерейсем умне тухса, хăйĕн илемлĕ сассипе çак çынсене, — тен, чылайăшĕ ют патшалăхсенче те курса çӳренĕскерсене — акăш-макăш тĕлĕнтерсе пĕтерчĕ, чăваш юррин ытармалла мар илемлĕхне туйтарчĕ... Иван Яковлевич Чăваш шкулĕн хорне улпут таврашĕсем умне туртса кăларса, чăваш хура халăхĕн илĕртӳллĕ пултарулăхне кăтартасшăн, палăртасшăн пулнă. Ĕлĕк вăл хăй чăваш юррисене итлесе, чăтаймасăр йĕрсе янă пулсан, халĕ çак юрăсемех Дворянсен пухăвĕнче культурăллă класс çыннисене тĕлĕнтерни Иван Яковлевичшăн питĕ паха, пысăк пĕлтерĕшлĕ япала пулнă».

Чăваш шкулĕнче хĕл каçиччен ирттернĕ концертсенче вырăс халăх юррисем те, романссем те, арисемпе ариозăсем те сахал мар янăранă. Я. Обухов асаилĕвĕнче хăй «Евгений Онегин» оперăри Ленский арине, «Риголеттăри» Серенадăна, романссемпе вырăс халăх юррисене концертсенче юрлани çинчен каласа парать.

Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕн хорĕ Кафедра тата Троицкий собор хорĕсем хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăнă. Чăваш юррисем шăршлă çырма-çатрасенче кăна янăраман пулмалла çав, вĕсем çавнашкал профессилле коллективсемпе тупăшма пултарнă пулсан...

Иван Митрофанович, шкулти хорсенче юрлама илнĕ чухне ачасен пултарулăхне çав тери тимлĕн тĕрĕсленĕ. «Эпĕ Чĕмпĕрти шкула 1906 çулта вĕренме кĕтĕм, — аса илет Капитолина Эсливанова, чăвашсен пĕрремĕш хĕрарăм дирижерĕ. — Вăл çулхине шăпах та Иван Митрофанович ĕçлеме тытăннăччĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн вăл пире пурне те пĕр пӳлĕме пуçтарчĕ, фисгармони умне ларчĕ те кашнинех уйрăммăн тĕрĕслеме тытăнчĕ. Мана вара пуринчен те ытларах тытрĕ, аккордсем итлеттерчĕ, вĕсенчи сасăсене уйрăммăн юрлаттарчĕ, кĕвĕсене асра тытма пултарнине, сасă диапазонне тĕрĕслерĕ. Эпĕ иккĕмĕш октавăри «до» патне çитсен, вăл кăмăллăн кулса илчĕ, хăйĕн аллине ман хулпуççи çине хучĕ те: «Эсĕ пирĕн солистка пулатăн», — терĕ.

Шел пулин те, Иван Дмитриевăн çамрăклах, çирĕм çиччĕ тултаричченех, сывлăхĕ хавшаса çитет, туберкулез чирĕ ăна уаран ӳкерет. Иван Яковлевич, епле тăрăшсассăн та, хăйĕн юратнă регентне вилĕмрен çăлаймасть. Вăл, питĕ пысăк хуйăха ӳкнĕскер, çавăнтах, çине тăрсах çĕнĕрен чăваш кадрĕсем хатĕрлес ĕçе хăвăртлатса пырать, тин анчах хăй шкулĕнчен вĕренсе тухнă Федор Павлова, Степан Максимова, Капитолина Эсливановăна килĕсене кайма тăхтама ыйтать, шкулти музыка ĕçĕсене тытса пыма кунтах юлма хистет. Хăйсен «ашшĕн» сăмахĕ вĕсемшĕн яланах саккун пек пулнă та, çамрăк музыкантсем Чĕмпĕр шкулĕнчех юлаççĕ. Иван Яковлевич пĕр тăхтаса тăмасăр хулари чаплă музыкантсемпе çыхăнать, Лыбинпа Крамертан Павлова, Максимова, Эсливановăна дирижер ĕçне хăнăхтарма уроксем пыма ыйтать, вĕсене тӳлеме укçатенкĕ уйăрса парать. Каярахпа, вĕренӳ çулĕ пуçлансан, Иван Яковлевич çамрăк

**музыканчĕсене хăй шкулĕнче хăварассишĕн Хусанти пуçлăхсемпе мĕн тери çапăçни те, вăл чăваш кадрĕсене сыхласа хăварассишĕн питĕ хытă тăрăшни те нумай япала çинчен калать.**

**Çакăнтан Чĕмпĕр шкулĕнчи музыка пурнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланать. Иван Яковлевич, Наполеон çарĕсене Раççейрен хăваласа кăларса янăранпа çĕр çул çитнине палăртас шутпа «Жизнь за царя» оперăна сцена çинче лартасшăн иккен те, хăйне канăç паман ĕмĕчĕ çинчен такампа та сăмахлать, шкулти мĕнпур музыка вăйне çак пысăкран та пысăк ĕç тавра явăçтарма шутлать. О. Ф. Крамер пулăшнипе симфони оркестрĕ те йĕркеленсе çитнĕ ĕнтĕ тахçанах, классиксен увертюрисем, оперăсенчи ташăсем самай чуна çĕклентермелле янăраççĕ. Павлов, Максимов, Эсливанова оркестрпа хора çирĕп ура çине тăратнă. «Жизнь за царя» оперăри нумай сыпăксене вĕренсе те çитнĕ. Константин Ивановпа Николай Некрасов пĕр канăç та пĕлмесĕр тенĕ пек декорацисем хатĕрлеççĕ...**

**Спектакль куракансене питĕ килĕшет.**

**Тепĕр кунне «Симбирянин» хаçат опера ăнăçлă иртни çинчен çав тери хавхаланса çырать.**

**«Хорпа оркестра çав тери лайăх хатĕрлесе çитернине пирвайхи сасăсенченех туйса илетĕн. Залра лараканнисем кашни хора, кашни арие тăвăллăн алă çупса чыс тăваççĕ.**

**«Чуют правду...» юрлать Павлов господин. Сасси аслатиллех хăватлă мар та, анчах тĕлĕнмелле уççăн янăрать. Антонида-Эсливанова «Не о том грущу, подруженьки...» каватинине макăрса тенĕ пек юрлать. Аслатилле хăватпа алă çупни кĕрлесе тăрать залра. Хор «Славься» финала юрланă чухне оркестр тинĕсри çил-тăвăл пекех хăватлăн янăрать. Залри халăх лара-тăра пĕлмест. Ку вĕренмелле кăна лартнă опера тесе никам та калас çук! Хăнасем хушшинче искусствăна тарăн пĕлекенсем те пуррине шута илсен, ку тата та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пурте искусство тыткăнĕнче, пурте хумханаççĕ.**

**Тĕлĕнмелле вăйлă аталаннă чăвашсем музыка енĕпе».**

**1913 çултах, декабрь уйăхĕнче, тепĕр пысăк концерт кăтартаççĕ шкулта. Федор Павлов пĕрлештернĕ хора юрăсем юрлаттарать. Унтан Александр Даргомыжский çырнă «Вутăш» (Русалка) оперăн малтанхи пайне лартса параççĕ. Арман хуçи партине Федор Павлов, Наташа партине — Капитолина Эсливанова, Князь партине Дубровин юрлаççĕ. Декорацине Константин Ивановапа аслă классенче вĕренекенсем хатĕрленĕ.**

**Иван Яковлевич чăваш халăх юррисемпе кĕввисене пичетлесе кăларас енĕпе те пысăк ĕçсем тăвать, ку ĕçе те вăл шкулти музыка вăйĕсене пĕтĕмпех явăçтарать. Унăн пуçарăвĕпе тимлĕхне пула 1908 тата 1912 çулсенче чăваш юррисен икĕ кĕнеки çапăнса тухать.**

**Сăмахăма вĕçленĕ май çакна каласа хăварам: Чĕмпĕр шкулĕ чăннипех те консерватори евĕрех пулнă, Иван Яковлевич пулăшнипе шкул чăваш музыкин йывăр тиевне малалла та малалла туртса пынă. Федор Павлов, Степан Максимов, Тимофей Парамонов композиторсем, Капитолина Эсливанова, Анна Токсина, Анна Казакова, Иван Васильев юрăçсем унта ăс пухса вăй илнĕ. Иван Яковлевпа унăн мухтавлă шкулĕн чăваш музыка культури умĕнчи пĕлтерĕшĕ нимĕнле виçепе те хаклайми пысăк та сумлă.**